# Эпех-ши айăпли?

Эпех-ши айăпли? Халь никама та
Юратаймастăп... Хушăран кăна,
Тахçан ача чухне пĕччен итленĕ
Айван та илĕртӳллĕ юрă пек,
Асра кăштах салхуллăн вăранаççĕ
Эс юратса каланă сăмахсем.
Анчах та эс тăхта «тĕсси» темешкĕн,
Е эп калла таврăнасса кĕтсе
Ан хатĕрле тирпейлĕ сăмахсем те.
Эп пытармастăп: халиччен мана
Нихçан никам та юратман сан чухлĕ,
Анчах çакна ăнлантăм халĕ çеç
Хам айăпа пула пĕччен юлсассăн...
Халь тин эп таврăнаймăп каялла,
Халь тин эп унчченхи пекех пулаймăп —
Упа çури пек çăмламас ача...

Çапла, халь тин калла эп таврăнаймăп,
Анчах каçар эс: халь те каçсерен
Сан кăкăру çине пуçа хурас та
Ик çул никам та лăпкаман çӳçе
Сухан шăршиллĕ пĕчĕк нӳрлĕ алă
Хуллен лăпканине туяс килет...

1954

*Айхи, Г. «Эпех-ши айăпли?...» : [сăвă] // Айхи, Г. Сăвăсемпе поэмăсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 28.*